**В начале июля во втором чтении Госдума одобрила поправки в Кодекс об административных правонарушениях (КоАП), ужесточающие ответственность за нарушения ПДД.**

Депутаты увеличили по сравнению с первым чтением с 2,5 до 5 тысяч рублей штраф за управление машиной человеком, лишенным водительских прав (сейчас 1-1,5 тысячи). За это же возможен арест до 15 суток. За езду без прав и передачу управления машиной человеку без таковых штраф с 0,7-1 тысячи вырос до 2,5 тысяч рублей.

Решено под состоянием опьянения понимать наличие абсолютного этилового спирта в концентрации 0,3 и более грамма на литр крови или 0,15 миллиграмма и более на литр выдыхаемого воздуха. Это примерно бокал вина. Кто лишен прав и повторно попался в нетрезвом виде за рулем — штраф 5 тысяч или арест на 15 суток, при этом срок лишения прав увеличивается с двух до трех лет.

Планируется, что «ужесточения» вступят в силу с января 2008 года. А те пункты, которые «упростят положение автовладельцев», должны начать действовать сразу после опубликования поправок. Например, не надо будет предоставлять в ГИБДД квитанцию об уплате штрафа. А при общении с инспектором, если водитель признал нарушение, можно обойтись без составления протокола. Вместо него выдается лишь квитанция с платежными реквизитами.

Минимальный размер штрафа составит 100 рублей, а не 300, как планировалось в первой редакции. Эвакуация неправильно припаркованных машин и первые сутки нахождения их на штрафстоянке будут бесплатными.

Разговор по мобильному без устройства «hands free» обойдется в 300, непристегнутый ремень — в 500, проезд на красный свет - в 700, движение по тротуару, велодорожке, обочине в 2000 рублей. Интересное нововведение — штраф за выбрасывание мусора в придорожной полосе составит для физических лиц 1-1,5 тысячи, для должностных - от 3 до 5 тысяч, для юридических - от 50 до 80 тысяч рублей.

Изменяются «процедурные» моменты. Водителя обяжут сдавать водительское удостоверение в течение трех дней после лишения прав. Кроме того, признают пьяным при обнаружении в крови любого количества наркотических или психотропных веществ.

### ПОД ПАТРОНАТОМ ПАТРИАРХА

**В этом году Россия отмечает 600-летие со дня блаженного успения преподобного Саввы Сторожевского, Звенигородского и всея России чудотворца, основателя одной из главных святынь Московской земли — Саввино-Сторожевского монастыря.**

В связи с этим с благословения Патриарха Московского и всея Руси Алексия II организован Всероссийский детский творческий конкурс «Святые заступники Руси». Он проводится с июня по октябрь 2007 года по двум номинациям: «Изобразительное искусство» и «Литературное творчество». Тематикой для работ могут послужить исторические события, связанные с именем преподобного Саввы, яркие моменты его жизни, посмертные чудеса. В конкурсе могут принять участие детские и молодежные творческие студии, центры, школы, православные гимназии, высшие и средние учебные заведения, а также граждане России до 16 лет. Работы необходимо направить до 1 октября.

По итогам конкурса будет издан альбом из лучших работ. Лауреаты приедут в Москву, посетят Саввино-Сторожевский монастырь, главные достопримечательности столицы. Заключительный концерт, выставка и награждение победителей Святейшим Патриархом пройдут в Зале Соборов Храма Христа Спасителя в конце года.

Дополнительная информация на сайте: www.detisavve.ru. Адрес: 125009, г. Москва, ул. Тверская, 6/1, стр. 6, Саввинское подворье.

### ПОСЕЛКУ ЖИТЬ И ЧИСТЫМ БЫТЬ

Засучим-ка рукава, березовские жители!

Вдоль дорог бурьян-трава, вырвать не хотите ли?

Мусор, грязь и там, и тут – кадры негативные.

Безнаказанно растут свалки эксклюзивные.

В общем, истина проста в свете экологии:

Мир спасает чистота!

А не демагогия!

Под таким призывом работники Березовского ЦСДК Константинова Л. Ю., Игнатьева И. А. и специалист по делам молодежи Степанова Т. Н., организовали и провели 26 июля на территории п. Березовка единый санитарный день. Девиз дня: «Поселку жить и чистым быть!»

Жители поселка приняли активное участие в «среднике». Они разделились на бригады и прочесывали (убрать весь мусор!) свою территорию. Чья куча больше – там и победа. В ходе работы деятельная молодежь объявила необыкновенный конкурс «Самая неожиданная и оригинальная находка». Победителем конкурса оказался... корпус от холодильника, который валялся вне дела на улице Молодежная. Теперь он гордо служит ящиком для мусора: и дешево, и удобно. Вывоз мусора организовал водитель Романов В. И.

В этот день березовские господа спасали жизнь с названием «среда».

***Л. КОНСТАНТИНОВА.***

### ВСТРЕЧА

Лето и Осень.

– Ну, что ж, довольно, погуляло и хватит. Уходи.

– Погоди, ничего еще не нагуляло. Когда успеть? Июнь – еще не лето, июль – уже не лето. Ведь на мне и сенокос, и второй укос, плоды еще не все созрели. Вот в том огороде томаты опоздали, а ты придешь – они уже завяли.

– А на мне, ты думаешь всего уж мало? Не первый год видать мне по колено слякоть и чистое небо, листьев золото и мухомор – погано. С тобой я попрощаюсь, мне назначено зиму повстречать. Торопись, цыплят по осени считают.

– Погоди, я уж много не прошу, дожди свои хоть убери (для себя прибереги). Каждый день дожди-дожди, надоели всем они. Что мне скажет человек? Не хочу я быть виной, что будет стол зимой пустой. Госпожа – Осень, нучуть-чуть, время дай. Быть может, вовремя успею.

– А время? Кто его дает? Оно в дефиците, ведь, знаешь. Да будут еще дни на летние похожие. И не отличим, Лето или Осень. Господь милостив, не горюй уж так, я рядом...

Зачем мне быть свидетелем свидания чужого? И петух уже давно поет, он точно время знает наизусть. И млечный путь зовет в свой путь. И опять, кто-то улетит, а кто-то остается.

И ты, земная жизнь, продлись для всех подольше.

***Р. ЕВГРАФОВА.***

**Производствăра пулнă инкек. Вăл – паянхи аграри тытăмĕнчи предприятисенче халĕ тăтăшах тĕл пулакан тĕслĕх. Çынсене ĕçпе тивĕçтерекенсемшĕн, тĕп специалистсемшĕн инкек тӳснисемшĕн /телее, вĕсем сывă юлнă пулсассăн/ çакă витĕмлĕ пулса тăма тивĕç. Шел, хальлĕхе çавăн пек «тӳнтерле» пулăмсенчен ниепле те хăтăлса пĕтеймесптпĕр-ха эпир.**

ПАЯНХИ КУН ТЕМИПЕ

# УПРАСЧĔ МЕХАНИЗАТОРСЕНЕ

Уй-хирте ĕçлекен механизаторсем йывăр суранланнин (çынсем е вилеççĕ, е инвалида тухаççĕ) калăпăшĕ пĕчĕк маррине патшалăх статистикин кăтартăвĕсем те лайăх çирĕплетеççĕ. Пирĕн çĕршывра хăрушсăрлăх йĕркисене пăхăнассине тĕпе хуманнисем çулсерен 1500 çынран кая мар вилеççĕ. Çав çынсем – ял хуçалăхĕнче питех те кирлĕ вăйпитти çынсем. Вилнĕ çынсен тулли списокĕпе паллашсан, мĕн курăнать? Вĕсем, пурăнас пулсан, 4-5 яллă районти кадрсене улăштарнă пулĕччĕç.

Вăл е ку инкекпе çыхăннă тĕслĕхсемпе пулăмсем çинчен паян хаçат-журналта тăтăшах çыраççĕ, вĕсем пирки телекуравсенче каласа параççĕ, вĕсене семинарсемпе курссенче, канашлусенче, ял хуçалăх вĕренӳ заведенийĕсенче тишкереççĕ.

Пирĕн шутпа, хăрушă инкекпе çыхăннă ĕç-пулăма, лару-тăрăва яваплă çынсен, профсоюз комитечĕсен тĕпĕ-йĕрĕпе сӳтсе явса, тивĕçлĕ мерăсем йышăнни кирлĕ. Аварисĕр ĕçлеме вĕренсе çитнĕ предприятисемпе организацисенче шăпах çапла тума тăрăшаççĕ те. Раççей Федерацийĕн кашни субъектĕн-чех, яллă чылай районсенче çакăн пек опыт пухнă хуçалăхсем пур.

Анчах та ял хуçалăхĕнче ĕçлекен çынсем çултан çул тенĕ пекех пĕрешкел инкек-синкеке лексе сусăрланаççĕ. Вĕсене çакăн пек ушкăнсене кĕртме пулать. Чи малтанах çул çӳремелли хăрушсăрлăх йĕркисене пăсни, пушатнă-тиенĕ вăхăтра транспорт хатĕрĕсемпе çынсем çине кĕрсе кайни, электрохатĕрсем юсавсăррипе ток çапни, станоксемпе ĕçленĕ чухне вĕсен çаврăнакан пайĕсене, транспортерсене хӳтлĕх япалисемпе хупламанни...

Паллах, кунта эпир çынсем вилнин е амансасусăрланнин пур сăлтавĕсене те илсе кăтартаймăпăр, çавăн пек тăвас тĕллев те çук пирĕн. Анчах та хамăрăн тăрăхра çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсем ытларах тĕл пулни шăпах вĕсем çине тимлĕх уйăрма кирли çинчен астутарать.

Раççей Федерацийĕн Ĕç Кодексĕнче производствăра сусăрланассипе çыхăннă ыйтусене, çак ĕçе пурнăçлас тĕлĕшпе туса ирттерекен профилактика пĕлтерĕшне уçăмлăн палăртнă. Кунпа пĕрлех ĕçлекен çынна хăрушсăрлăх йĕркипе камсен тивĕçтерсе тăмалли те паллă çав документран.

Юлашки çулсенче аграри тытăмĕнче вăй хуракансем производствăра аманса сывлăхсăр тăрса юласси чи малтанах хӳтĕленмелли кирлĕ хатĕрсемпе япаласем çителĕксĕр е вĕсем япăх пахалăхлă пулнипе çыхăннă. Хĕрӳ тапхăрта вара çав сăлтавсене пула механизаторсем, сварщиксем, аккумуляторщиксем, юсав ĕçне хутшăнакан ытти рабочисем аманасси ытти чухнехинчен 20 процента яхăнах ӳсет.

Акă Волгоград облаçĕнче отрасльти профсоюз обкомĕ Патшалăхăн Ĕç инспекцийĕпе тата ял хуçалăх управленийĕсен органĕсемпе пĕрле ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене хӳтĕлев хатĕрĕсемпе мĕнлерех тивĕçтернине тĕрĕсленĕ. Кичем ӳкерчĕк тухса тăнă çакăн хыççăн. Ялти кашни çын пуçне ку енĕпе уйăракан укçа пĕтĕмпе те... 6 тенкĕпе кăна танлашнă. Мĕн илетĕн унпа? Алса та унран хаклăрах тăрать. Чылай предприятисенче вара çавăн пек хатĕрсем туянса парасси çинчен мансах кайнă. Кун пек тĕслĕх кашни утăмрах, хамăр районти лару-тăру та чаплă мар. Чăн та, пус çумне пус хушса пырса аран-аран ăна-кăна туянма хал çитерекен хуçалăхсен ăçта кайса кĕмелле, камăн куçĕнчен пăхмалла? Инкек куçа пăхса килмест. Вăл пулчĕ тĕк, айăплисенчен пурĕпĕрех çивĕч ыйтаççĕ, кунта тӳрре тухма тесе сăлтав шырани кăлăхах...

Лару-тăру йывăр пулсассăн та, ĕçлекен çын сывлăхĕшĕн куллен-кун тăрăшасси çинчен самантлăха та манмалла мар. Хӳтĕленмелли хатĕрсем илсе тăккаланă укçа-тенкĕ çăмăллăнах саплашăнĕ.

Вырма вăхăчĕ çитрĕ. Çак тапхăрта уй-хирте, выльăх апачĕ хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекенсен уйрăмах тимлĕ пуласчĕ. Сыхăлăхпа асăрханулăх пирки манас марччĕ.

Çын сывлăхĕ – нимĕнле хакпа та виçме çук пуянлăх. Тĕрлĕ шайри влаç тытăмĕнче, право органĕсенче, профсоюз комитечĕсенче, правленисенче ĕçлекенсен çак ыйтăва кун йĕркинчех тытасчĕ. Тимсĕрлĕхпе хуçасăрлăха çул памалла мар.

***В. ГАВРИЛОВ,***
***патшалăхăн асăрхав инспекцийĕн пирĕн районти тĕп инспекторĕ.***

# «ТРАКТОР» УЙĂХЛĂХ-ОПЕРАЦИ ПЫРАТЬ

Пĕлтĕрхи çурла уйăхĕн 1-31-мĕшĕ хушшинчи тапхăрта районта «Трактор» уйăхлăх-операци ирттернĕччĕ. Çав тапхăрта пĕтĕмпе 254 тракторпа хăй тĕллĕн çӳрекен ытти машинăсене, вĕсенчен кăкарнă прицепсене тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче çавăн пек техникăран 5-шĕ регистраци йĕркине пăснине, 10-шĕ патшалăхăн техника тĕрĕслевĕнче пулманнине, иккĕшне тракторист-машинистăн удостоверенисĕр çынсем тытса пынине, 5-шĕ регистраци паллисĕрех, 20-ĕшне юсавсăрах çула тухнине палăртнă.

Мĕнпур çитменлĕхсем тăрăх районти предприятисемпе организацисен ертӳçисене 5 предписани çырса панă, администраци енчен 11 ертӳçĕне 2000 тенкĕлĕх штрафланă тата 10 тракторăн регистраци поллисене илнĕ.

Çапла вара, пĕлтĕр ирттернĕ «Трактор» уйăхлăхра тракторсемпе хăйсем тĕллĕн çӳрекен ытти машинăсен хуçисем хушшинче туса ирттернĕ ĕçсем техникăпа усă курассине, çул çӳремелли йĕркесене пăхăнассине палăрмаллах лайăхлатма май панă.

Анчах та уйăхлăх пынă вăхăтра тупса палăртнă çитменлĕхсем районта ку ĕçре çав-çавах пысăк çитменлĕхсемпе кăлтăксем вырăн тупнине çирĕплетеççĕ.



Çавна шута илсе, хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсене, ытти техникăна тĕрĕслесе тăракан Патшалăх инспекцийĕпе Шалти ĕçсен министерствин çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн управленийĕ 2007 çулхи çурла уйăхĕн 1-31-мĕш кунĕсенче «Трактор» уйăхлăх-операци ирттерме йышăнчĕç. Çак мероприятие йĕркелесе, хатĕрленсе ирттерме ĕç ушкăнĕ туса хунă, ăна ертсе пыма ЧР Патшалăх асăрхав инспекцийĕн пуçлăхĕн çумне – тĕп инженер-инспекторне С. Г. Мякинина çирĕплетнĕ.

***В. ГАВРИЛОВ,***
***патшалăх асăрхав инспекцийĕн пирĕн районти пуçлăхĕ.***

ЭКОНОМИКА

# КĂТАРТУСЕНЕ ПĔТĔМЛЕТНĔ

**Районти пысăк тата вăтам предприятисем кăçалхи пĕрремĕш çур çулта социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнче тунă кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ.**

Хăйсем туса кăларнă таварсене тиесе ăсатмалли тата ытти енĕпе тунă ĕçсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 63500 пин тенкĕпе танлашнă.

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне ял хуçалăх продукчĕсем (кунта хуçалăхсемпе пĕрлех халăхăнне те шута илнĕ) илесси 44462 пин тенке çитнĕ е, иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан, 108,3 процент пулнă.

Аш-какай туса илесси 116,2 процентпа, сĕт туса илесси 117,9 процентпа танлашнă.

Çак тапхăрта кашни ĕнерен вăтам шутпа 1872 килограмм сĕт сунă. Ӳсĕм иртни çулхин 115 проценчĕ чухлĕ.

Халăха 36,9 миллион тенкĕлĕх тӳлевлĕ пулăшу панă.

Халăха тӳлевлĕ пулăшу парассин пĕтĕмĕшле калăпăшĕн индексĕ, иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан, 105,5 процент пулнă.

Ваккăн сутмалли таварçаврăнăш калăпăшне 210,2 миллион тенке çитернĕ.

Çак калăпăшăн индексĕ пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 129,3 процент ӳснĕ.

Списока кĕртнĕ ĕçлекенсен йышĕ – 4800 çын, вăтам ĕç укçи – 4448,8 тенкĕ.

2007 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕççĕрлĕх шайĕ 1,33 процент пулнă.

Пурăнмалли çурт-йĕрсене ĕçе кĕртнин калăпăшĕ – 8480 тăваткал метр, ӳсĕм хăвăртлăхĕ – 115,4 процент.

***Район администрацийĕн экономикăпа пурлăх управленийĕн пайĕ.***

# КООПЕРАТИВĂН МАЛТАНХИ УТĂМĔСЕМ

Ял хуçалăх продукчĕсене вырнаçтарма пулăшакан «Шăрттан» потребкооперацире кашни кунах халăхран 1 тоннăна яхăн сĕт пуçтараççĕ тата ăна Канашри сыр тăвакан комбината ăсатса тăраççĕ. Виктор Ефремов водитель ирпе тата каçпа сĕт пуçтарма тухать. Кооператив сĕте сивĕтмелли оборудовани туяннă, вăл пулăшнипе продукцие сивĕтсе кăна сутаççĕ.

Кăçал «АПК аталанăвĕ» проектпа 2 трактор туяннă, халĕ вĕсем кĕр тыррисем акма çĕр хатĕрлеççĕ. Владимир Петровпа Николай Петров трактористсем ку ĕçре тăрăшуллă.

Кооперативра çĕр улми йăранĕсене çыраççĕ тата лаптăка çум курăкран гербицидсемпе, колорадо нăррисенчен ядохимикатсемпе имçамлаççĕ.

***Н. ЕФРЕМОВА,***
***Шăрттан ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.***



***Д. ДИМИТРИЕВ фотоэтючĕ.***

КРИМИНАЛ

# ÇАРАТАÇÇĔ, ТУСТАРАÇÇĔ

Кăçалхи утă уйăхĕн 22-мĕшĕнче çурçĕр çитеспе Вăтаелĕнче пурăнакан Борис Моисеевич Петровăн автомашинине çăмăллăнах уçса кĕрсе, паллă мар çын унăн «Нокиа-1110» маркăллă мобильникне тата 1200 тенкĕ укçине вăрласа кайнă.

х х х

Йĕпреç поселокĕнче пурăнакан Альбина Петровна Матросова та вăрăсен măшкăлне тӳснĕ. Унăн хваттерне уçă юраттарса кĕнĕ, сăрă шкафран 9 пин тенкĕ укçа тата 2 ылтăн çĕрĕ вăрласа тухнă.

х х х

Йĕпреç поселокĕнчи Дамир Рамилович Низеев та, хăйĕн хваттерне уçă юраттарса кĕрсе килтен 9 пин тенкĕ укçа, 2 ылтăн çĕрĕпе 2 ылтăн хăлха çакки çухални çинчен милицие пĕлтернĕ.

х х х

«Ибресинская» агрофирмăн Шăрттанти складĕнчен паллă мар çын питĕрнĕ çăрана çĕмĕрсе, тырă вăрласа кайнă.

Халĕ тивĕçлĕ органсем вăрăсене тупса палăртас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

***Шалти ĕçсен районти пайĕн штабĕ.***

# НУЖНА ПОДДЕРЖКА НА БЛАГОРОДНОЕ ДЕЛО

Министерством здравоохранения и социального развития ЧР принято решение о выделении Ибресинскому району врача специалиста-патологоанатома и финансовых средств на специализированное оборудование для открытия в Ибресинском районе морга. В настоящее время жители Ибресинского района вынуждены производить вскрытие трупов в Вурнарской ЦРБ в количестве до 400 в год, что доставляет большие неудобства и затраты предприятиям и населению района. В связи со сложившейся ситуацией и недостатком бюджетных средств, Советом работодателей Ибресинского района от 18 июня 2007 года принято решение по открытию целевого счета для сбора финансовых средств на ремонт морга Ибресинской ЦРБ и перечислению в размере однодневного заработка с каждого работника предприятий, организаций, учреждений всех форм собственности, но не менее 150 рублей на каждого работника; предприятия, работающие по исполнению муниципальных заказов – не менее 200 рублей на каждого работника; индивидуальные предприниматели – не менее 500 рублей.

Сметная стоимость проведения ремонта бывшего здания морга составляет более 500 тыс. рублей.

**РЕКВИЗИТЫ ДЛЯ ПЕРЕЧИСЛЕНИЯ:**
**р/с 40101810900000010005**
**Банк получателя : ГРКЦ НБ Чувашской Республики Банка России г. Чебоксар**
**БИК 049706001**
**Получатель: УФК по ЧР (администрация Ибресинского района ЧР)**
**ИНН 2105002182**
**КПП 210501001**
**ОКАТО 97213000000**
**Код дохода 90311705050050000180**

Прочие неналоговые доходы бюджетов муниципальных районов (добровольные пожертвования на ремонт морга).

Надеемся на взаимопонимание и финансовую поддержку благородного дела.

ÇАМРĂКСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

# САНСĂР ПУРНĂÇ ÇУК

Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать, каччăн кусĕнчен куççуль юхать. Çумăр та ăна хăратаймĕ халĕ, тăвăл та вырăнтан хускатаймĕ. Куççуль витĕр çамрăк хĕрĕн сăн ӳкерчĕкĕ çине пăхса тăрать. Паянхи пек астăвать вăл иртнĕ çулсене. Вĕсенчен телейли çук пек туйăнатчĕ икĕ çамрăк чĕрешĕн ун чухне. Хура кушак хăçан касса кайрĕ-ха вĕсен çулĕ урлă?! Мĕншĕн халĕ Миша Таньăна ыталас вырăнне унăн вил тăприйĕ умĕнче тăрать? Мĕншĕн унăн аллинче çĕрĕ мар, мăшăр çеçке? Мишăн пуçĕнче темĕнле ыйту та çаврăнать, анчах вĕсем çине хурав параканĕ çук. Кăшкăрса макăрсан та текех Таньăна тавăраяс çук ĕнтĕ.

Мишăпа Таня пĕр-пĕрне килĕштерме пуçланăранпа 5 çул та иртрĕ. Таня ун чухне 11-мĕш класс пĕтернĕччĕ. Миша тин çеç салтакран килнĕччĕ. Вĕсем кашни кун тенĕ пекех тĕл пулатчĕç. Ытти çынсем те вĕсем çине ăмсанса пăхатчĕç. Тен, çавăнпа куç «ӳкрĕ» те пулĕ.

Таня шкул хыççăн Шупашкара çул тытрĕ, университета та çăмăллăнах вĕренме кĕчĕ. Кунта вара хĕр çĕнĕ çынсемпе çывăхланса кайрĕ. Миша çинчен пачах шутлама пăрахрĕ. Яла та сахалтарах килме тытăнчĕ. Пĕррехинче пĕр каччăпа паллашрĕ. Ваня ăна часчасах ресторана, кинона илсе çӳретчĕ. Хаклă йышши парнесем кӳреччĕ. Чи кирли уншăн юратупа чыс мар, укçа пулса тăчĕ. 3-мĕш курсра Таня Ваньăна качча тухрĕ. Тен, юратман та вăл ăна?

Миша вара хĕре манаймарĕ. Унăн чĕринче пĕчĕк шанчăк хĕлхемĕ ялкăшрĕ. Таня килессе кĕтрĕ вăл. «Хĕр качча тухнă» тенĕ хыпар вара ăна хуççас антарчĕ. Кăшт вăхăтран Миша «Унăн упăшки вилнĕ, тăлăх арăм ĕçке ернĕ» тенĕ сăмахсем илтрĕ. Пĕчĕккĕн хĕр арăм вилнĕ упăшкин пурлăхне те салатса пĕтернĕ иккен. Çак сăмахсене ĕненме пултараймарĕ Миша. Пулма пултараймасть! Таня – ĕçке ернĕ? Суя ку! Таня яланах сăпайлă, тирпейлĕ хĕр пулнă-çке. Çунчĕ, асапланчĕ каччă.

Халĕ вăл унăн вил тăприйĕ умĕнче тăрать. Çук, сăмахсем суя пулман иккен. Хăй савнă хĕр ăна текех пĕр сăмах та чĕнеймĕ. Кам валли пăрахса хăварчĕ вăл Мишăна? Чĕнмест Таня, тăраймĕ вăл çак тĕпсĕр шăтăкран. Чечек çыххине вилтăпри çине тирпейлĕн хучĕ те Миша, аллине чĕри тĕлне тытса: «Таня, сансăр ман пурнăç çук», – терĕ.

Çумăр вăйлăрах та вăйлăрах çума тытăнчĕ. Таврара çиçĕм алхасрĕ, аслати сасси чуна çурмалла илтĕнсе тăчĕ...

***Аня ЭПТЮШЕВА, ЧПУ студентки.***

# ЧĔРЕ СУРАНĔ СИПЛЕНМЕСТ

Таня, ытти хăш-пĕр хĕрарăм пек, хăйĕн пурнăçне пĕрре те ӳпкелемест. Унăн хăйне ăнланакан тата чĕререн юратакан упăшки пур. Сăнĕпе ашшĕне хывнă иккĕри хĕрĕ ӳсет. Телейлĕ пулма тата мĕн кирлĕ-ши çамрăк хĕрарăма? Анчах та пурнăç яланах хамăр тăвас тенĕ пек йĕркеленсе пымасть çав. Вăл пĕрисене юратупа туслăх, телейпе ăнăçу илсе килет, теприн чĕринче нихăçан тӳрленми суран хăварать... Тин çеç çирĕм иккĕ тултарнă хĕрарăма мĕн хумхантарать-ха?

... Пĕрремĕш юрату... Камăн чĕрине тыткăнласа çунтарман-ши вăл хăйĕн асамĕпе? Пĕрремĕш юрату ăнмарĕ çав Таньăн. Çамрăклах амантрĕ. Вун çиччĕреччĕ вăл. Хитре те яштака, сăпайлă та ырă кăмăллă хĕр медицина институтне вĕренме кĕчĕ. Саша журналистика факультетĕнче, иккĕмĕш курсраччĕ. Çуллахи кану вăхăтĕнче иккĕшĕ те тăван ялĕсенче канчĕç вĕсем. Хĕрпе каччă кӳршĕллĕ ялта ӳссе çитĕннĕ. Кашни каç пĕрле уçăлса çӳретчĕç, телей çинчен ĕмĕтленетчĕç. Таньăпа Саша виçĕ çул хушшинче пĕр-пĕрне çывăх пĕлсе çитрĕç. Ăмсанатчĕç те вĕсен таса юратăвне. Çамрăксем кĕçех пĕр çемье тĕвĕлесси çинчен калаçса татăлчĕç. Анчах та темшĕн-çке палăртнă кун иртенпех чĕри вырăнта пулмарĕ хĕрĕн. Теме сиснĕн, хыттăн та хыттăн, кăкăртан тухса тарасла, тапрĕ вăл. Кунĕпех пĕр ыйту канăç памарĕ хĕре. «Мĕншĕн, мĕншĕн килмерĕ-ха Саша?» – вĕçĕмех ыйтрĕ хĕр хăйĕнчен. Виçĕм кун кас та, ĕнер те килмерĕ. Мĕншĕн? Пĕр ĕç патне те алли пымарĕ ăшĕ çуннăскерĕн: чашăк-тирĕк çунă чухне чашăка аллинчен ӳкерсе çĕмĕрчĕ, васканипе куркари шывне ăнсăртран тăкса ячĕ. Кăнтăрла иртсен чĕрине ыраттаракан хыпар илтрĕ хĕр. «Кашкăр Саши авланнă, хăйсен ялĕнчи Макçăм Сантăрĕн хĕрне илнĕ», – тесе сăмахларĕç карчăксем. Уяр кун аса çапнă пекех пулчĕ ку. Малтанах ĕненме пултараймарĕ Таня çакна... «Пулма пултараймасть, йăнăш илтмерĕм-ши? Ирина мĕнлерех якăлти пулнине пурте пĕлесçĕçке», – асапланчĕ хĕр.

Шел, хыпар тĕрĕсех пулчĕ çав. Кунран-кун шуралса, начарланса пычĕ Таня. «Ытла ан хурлан, турă пӳрни тупăнĕ-ха пурнăçунта», – ăна тантăшĕсем лăплантарма тăрăшрĕç.

Вăхăт малаллах шурĕ. Каллех сесси пуçланчĕ. Пĕтĕм вăйне вĕренĕве пачĕ Таня. Йывăр пулсан та, Сашăна манма тăрăшрĕ.

Таня кĕçех Эдикпа паллашрĕ. Çӳллĕ те хитре, ырă кăмăллă, çынна ăнланакан каччă. Пĕр-пĕрне часах хăнăхса çитрĕç каччăпа хĕр. Эдик хĕре юратни çинчен пĕлтерчĕ, мăшăрĕ пулма ыйтрĕ. Таня та кила килĕштерчĕ. «Пĕрремĕш юрату тесе ĕмĕр кулянса пурăнаймăн, Саша – авланнă çын, унăн хăйĕн çемье. Сана телейлĕ тăвас тесе пĕтĕм вăй-хала хурăп, мана качча тухнăшăн ӳкĕнмĕн», – лăплантарчĕ хĕре Эдик, хăйне ăнăçсăр юрату шăпи пирки каласа панă хыççăн. Каярах Саша мĕншĕн авланнин сăлтавне те пĕлчĕ Таня. «Ман ача санран», – тенĕ иккен ăна Ирина. Анчах амăшне те, ашшĕне те хывман ывăл ача. Вăл пачах урăх сăнлă. «Ирина улталаса ирĕксĕр качча тухнă», – пĕлтерчĕ ăна тантăшĕ пĕррехинче.

Пилĕк çул иртнĕ хыççăн тĕл пулчĕç Таньăпа Саша. Мĕнлерех пăлханулăн тапрĕç вĕсен чĕрисем çак самантра! Çавна иккĕшĕсĕр пуçне никам та пĕлеймерĕ. Темчченех калаçса тăчĕç вĕсем. Калаçуран Саша арăмĕпе килĕштерсе пурăнманнине пĕлчĕ Таня. «Манăн санăн умра пысăк айăп пур, Таня. Упраса хăвараймарăм таса юратăва. Юратман Иринăна эпĕ нихăçан та. Вăхăт иртсермелле пĕр кас кайнăччĕ эсĕ ялта çук чухне. Çывăхланнăччĕ. Анчах та эпĕ пĕрремĕш те, юлашки те пулман унăн. Çак таранччен пĕр сана çеç юратса пурăнтăм. Каçар мана, тархасшăн», – куççуль витĕр тухрĕç Сашăн сăмахĕсем.

«Иртнине каялла çавăраймăпăр. Манăн хĕр, санăн ывăл ӳсет. Санпа яланах çывăх туссем пулса юлăпăр», – лăпкăн каларĕ çамрăк хĕрарăм.

Сашăпа сыв пуллашрĕ те вăл, малалла васкавлăн утса кайрĕ. «Тăхта, Таня!» – аран-аран тухрĕç Саша сăмахĕсем. Çук, чарăнса тăмарĕ Таня, малаллах утрĕ. Пĕрремĕш юрату çулсем иртсен те манăçманнине ăнланчĕ, анчах вăхăта каялла тавăрма май çукки шухăшлаттарчĕ ăна. Халĕ унăн хăйĕн телейĕ, хăйĕн ăраскалĕ...

***Людмила КРАСНОВА, ЧПУ студентки.***

# ЧЕЧЕК ЯЛА ИЛЕМЛЕТЕТ

Кашни çын илем патне туртăнать. Ку туртăм вара чуна çĕклет, таса туйăмсем çуратать. Акă, хире тухсан, тем тĕрлĕ чечек те куратăн: хĕрли, сарри, кăвакки... Вĕсене шеллевсĕр татни вара çут çанталăка, тавралăха сиен кӳниех. Пирĕн тăван тавралăха илем кӳме, унăн пуянлăхне хушса пыма хамăрăн тивĕçлĕ тӳпе хывмалла. «Çут çанталăк пире хăйĕн илемĕпе савăнтарать, пирĕн те ăна ырă тăвас пулать», – тет Энтриелĕнчи шкулта ачасене пĕлӳ паракан Т. А. Димитриева. Манăн ентешĕмсем яла илемлетес тесе пахчасенче тĕлĕнмелле чечексем лартса ӳстереççĕ.

И. Агеева, Н. Лазарева, О. Федорова, Л. Зорина, Т. Димитриева, Ю. Николаева, А. Семенова т. ыт. те çак енĕпе нумай тимлеççĕ, ыттисене хавхалантараççĕ. Асăннă хĕрарăмсенчен хăшĕсем – И. Агеева, Н. Лазарева, Ю. Николаева ял тăрăх администрацийĕн ятарлă парнисене тивĕçрĕç.

Юратса, тăрăшса тăвакан ĕç сая каймасть çав.

***Мальвина НИКОЛАЕВА, ЧПУ студентки.***

## САЛАМЛАТПĂР

Çак кунсенче пирĕн çывăх та хаклă çыннăмăрсем – Пысăк Упакассинчи **Татьянăпа Юрий АСОНОВСЕМ** пĕрлешсе çемье тунăранпа 10 çул çитрĕ. Телейлĕ мăшăра кĕрен туй ячĕпе тата кил хуçине вăтăр çул тултарнă ятпа чун-чĕресен тасалăхĕпе, кăмăл-туйăмсен çепĕçлĕхĕпе тулнă салам яратпăр, пурнăç çулĕ тăрăх ӳлĕмрен те пĕр-пĕрне килĕштерсе утма, юрату телей-савăнăçне пĕрле пайлама ырлăх-сывлăхпа ăнăçу сунатпăр.

Кулă çиçсе тăтăр сăн-питре,
Ăна хуйхă-суйхă ан хураттăр.
Пурнăç вăл юратупа хитре,
Ĕмĕрех пĕрне-пĕри юратăр.

***АМĂШĔ, ЙĂМĂКĔСЕМ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.***

xxx

Ытарайми тĕнче пилленĕ аннене, тараватлă та кăмăллă хунямана, асанне-кукамая, мăн асаннене мăн кукамая, çывăх тăвана, тăхлача – Шăрттан ялĕнче пурăнакан **Зоя Ивановна ЮМАНОВАНА** чаплă юбилейпа – сакăр теçетке çул тултарнă ятпа кĕр мăнтăрĕ пек тулăх кунçул, çăл куçĕ пек тапса тăракан иксĕлми вăй-хал, çутă ăраскалпа таса ăшпиллĕх сунатпăр, ачисемпе мăнукĕсен, мăнукĕсен ачисен савăнăç-телейне пĕрле пайласса шансах тăратпăр.



Ĕмĕр çулĕпе малалла та хавхаланса утмалла пултăр.

***2 ЫВĂЛĔПЕ 2 ХĔРĔ, КИНĔСЕМПЕ КĔРӲ ШĔСЕМ, 9 МĂНУКĔ, 5 МĂНУКĔН АЧИСЕМ, ХĂТИСЕМПЕ ТĂХЛАЧИСЕМ, БИБУЛИНСЕН ÇЕМЙИ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Мăшăра, аттене, кĕрĕве, çывăх тăвана – Вăтаелĕнче пурăнакан **Николай Филиппович ИЛЬИНА** чаплă юбилейпа – пурнăç çулĕн варрине çитсе тăнă ятпа иксĕлми хĕрӳлĕхпе тата тараватлă туйăмпа ăшшăн саламланă май, кунçул сарса хунă мăн çулпа хуйха-суйха, чир-чĕре, нуша-асапа пĕлмесĕр юрласа та хавхаланса кăна утма ырлăх-сывлăх, вăй-хал, телейпе ăраскал сунатпăр.

Малалла утса каяс çул-йĕрӳ кĕскелсе мар, вăрăмлансах пытăр, телей алтăрĕ яланах чăмпи тулса тăтăр.
Аллă çул вăл – чăннипех те паллă,
Пурăнмалла пултăр тепĕр аллă.
Йышпа пĕрле ут эс савăнса,
Ырлăх-пурлăху та пытăр хушăнса.

***МĂШĂРĔ, 2 ЫВĂЛĔПЕ 2 ХĔРĔ, ХУНЯШШĔПЕ ХУНЯМĂШĔ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.***


**535. ПРОДАЮ кирпич, возможна доставка.**
**Телефон: 89023274036.**
2-1


## УВАЖАЕМЫЕ АБОНЕНТЫ ОАО «ВОЛГАТЕЛЕКОМ»!

**ИБРЕСИНСКИЙ РУЭС КАНАШСКОГО МУЭС филиала в Чувашской Республике ОАО «ВолгаТелеком»**

доводит до Вашего сведения, что в связи с проводимой реконструкцией сельских АТС в период с 01.08.2007 г. по 31. 08. 2007 г. будет проводиться замена абонентских номеров на новые по следующим станциям:

| Наименование АТС | Старая нумерация | Новая нумерация |
|---|---|---|
| АТС Айбечи | 302XX | 246XX |
| АТС Большие Абакасы | 312XX | 244XX |
| АТС Нижние Абакасы | 322XX | 243XX |
| АТС Климово | 332XX | 241XX |
| АТС Андреевка | 342XX | 242XX |
| АТС Новое Чурашево | 353XX | 248XX |
| АТС Хормалы | 372XX | 270XX |
| АТС Чуваш-Тимяши | 382XX | 272XX |
| АТС Огонек | 392XX | 273XX |
| АТС Малые Кармалы | 413XX | 274XX |
| АТС Березовка | 422XX | 276XX |
| АТС Бугуяны | 432XX | 277XX |

Просим свои извинения за временные неудобства.


**НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ ТРЕБУЮТСЯ:**
- столяр – з/п 10 тыс. руб.
- автокрановщик – з/п от 10 тыс. руб.
- водители I класса – з/п от 10 тыс. руб.
- водители II-III классов – з/п от 5 тыс. руб.
- рабочие на пилораму – з/п от 10 тыс. руб.
- разнорабочие – з/п 200 руб. в день.
- кочегары (твердое топливо) – з/п 300 руб. в сутки.
- сварщики – з/п 5 тыс. руб.
- сторожа – з/п 300 руб. в сутки.
- бухгалтер – з/п от 4 тыс. руб.
- начальник ПТО (сметчик) – з/п от 15 тыс. руб.
- программист – з/п от 5 тыс. руб.
- бригада отделочников (штукатуры, плиточники, столяры) – з/п по договоренности.

**Телефоны: 2-10-41, 2-10-94, 68-64-60, 68-09-44.**

**ООО «ДОМАШНЯЯ МЕБЕЛЬ»**
**СРОЧНО ПРИМЕТ на работу на конкурсной основе слесаря-наладчика.**
**Заработная плата составит: 8000 руб. в месяц + премия, возраст до 40 лет.**
**Обращаться: пос. Ибреси, ул. Газопроводная, д. 21, тел.: 2-25-95, 2-16-73.**
3-2

**509. ПРОДАЕТСЯ дом с надв. постройками и плодоносящим садом. Тел.: 89033598723.**

**531. ПРОДАЮ дрова березовые. Т.: 89033464451.**


Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.


*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, производственный участок — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3253: чув. – 2412, русск. – 841 Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓡ

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Евграфова Р. А.